# чыслă та хисеплĕ тивĕç

**Афганистан çĕршывĕнче çар тивĕçне пурнăçланă интернационалист-салтаксен тĕл пулăвĕнчен**

## “Каллех тревога, каллех каятпăр çапăçăва…”

18 çул иртрĕ унтанпа. Совет салтакĕсене кӳршĕллĕ Афганистан Республикинчи вăрçăран кăларнăранпа хыçа юлнă çак вăхăтра çуралса ӳссе 18 çул тултарнă яшсен кăçал çуркунне арçын тивĕçне пурнăçласа çар ретне тăмалла... Тин çуралакан ачасем таса та сывă ӳсчĕр, ашшĕ-амăшĕсем тулли хăватпа ĕçлеччĕр тесе вĕсен те çĕршыв умĕнчи тивĕçе туллин пурнăçламалла. Ахальлĕн...

– Çĕршыв интересĕсене хӳтĕлесе кӳршĕллĕ Афганистан Республикинчи вăрçа вунă çул хутшăннă çар подразделенийĕсене унтан 1989 çулхи нарăсăн 15-мĕшĕнче кăларчĕç. Пирĕн салтаксемпе офицерсемшĕн унти вăрçă тинех чарăнчĕ. Сăртлă-туллă çĕршыври вĕсен паттăрлăхĕ вара нихăçан та пирĕн асран тухмĕ, манăçмĕ. Вăл паян çар ретне тăракансемшĕн те ырă тĕслĕх. Ачасем, ĕнерхи салтаксем халĕ те йăрăс пӳллĕ пулни вĕсем паян та çĕршыва хӳтĕлеме хатĕр пулни пирки калать. Тĕслĕх илĕр вĕсенчен, – терĕ февралĕн 17-мĕшĕнче Калайкассинчи вăтам шкулта кăçал вуннăмĕш хут интернационалист-салтаксен тĕл пулăвне уçнă май районти çар комиссарĕн çумĕ Д. Захаров шкул ачисем умĕнче.

Вуннăмĕш тĕл пулу терĕмĕр те çак ырă пуçарăвăн та хăйĕн историйĕ пур. Кун пирки Афганистанра çар тивĕçне пурнăçлассипе службăра тăнă салтаксене чыс-сум тăвассине йĕркелессин пуçаруçисенчен пĕри Калайкассинчи вăтам шкул вĕрентекенĕ Евгений Евстафьевич Ерагин каласа панинчен:

– Çарта пулнă кашни çамрăках хĕсметрен таврăнсан тăван шкула çитсе курмаваскать. Икĕ çул каялла кăна-ха ача туйăмлă пулнă паянхи çамрăк арçынсен кăмăлне ăнланма пулать: вĕсем самантлăха пулсан та телейлĕ ачалăх сукмакĕпе утасшăн, иртнине кăмăллăн аса илесшĕн. Афган вăрçинчен таврăннă яшсем çак çулпа пынине пăхма ытла та кансĕрччĕ.



Интернационалист-салтаксен тĕл пулăвне спонсорла пулăшу паракан А.Ю.Соловьевпа Афганистанра 1982–1984 çулсенче пулнă, халĕ районти шалти ĕçсен пайĕнче следстви уйрăмĕн пуçлăхĕнче ĕçлекен Константин Иванович Петров. Ĕнерхи афганец виçĕ эрне каялла “ШĔМĕн чи лайăх следователĕ” ята тивĕçрĕ. Мирлĕ ĕçре те парăнмаççĕ интернационалист-салтаксем.

Пирĕн çарсене 1989 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнче Афганистанран тĕппипех кăларсан, мирлĕ пурнăçра пурăнакансен чун хумханăвĕ Калайкассинче тĕрлĕ çулсенче унта пулнă ентешсене пĕр çĕре пухас шухăш çуратать. Çĕлеменкассинчи Сергей Дмитриевич Кошкин та çапла шутланипе тата вăл çине тăрса хĕтĕртнипе иртнĕ ĕмĕрти 90-мĕш çулсем пуçламăшĕнче Калайкасси тăрăхĕнчен Афганистанра службăра пулнисене пĕрле пухса шкулта паттăрлăх урокĕсем ирттересси пурнăçа кĕрет. Ырă вăрлăхăн çимĕçĕ те чаплă. Паян Раççейри интернационалист-салтаксен астăвăм кунне халалласа Калайкасси шкулĕ çулленех çамрăклах çак вăрçă вутĕнче пулнисен тĕл пулу кунне ирттерет, çак ĕçе малалла аталантарма май çитнĕ таран ĕç тăвать.

– Паттăрсен ячĕсем ăруран ăрăва куçмалла. Эпир çакна тума пултаратпăр пулсан, пирĕн ачасен чĕрисенче те паттăрлăх туйăмĕ иксĕлмĕ. Çакă сăмахпа мар, ĕçпе çирĕплентĕр тесе эпир паянтан шкулта Афганистан Республикинче çар тивĕçне пурнăçланă яшсене халалласа музей уçма пӳлĕм уйăратпăр, – терĕ асăну митингĕнче Калайкассинчи вăтам шкул директорĕ Ирина Венедиктовна Осипова интернационалист-салтаксемпе тĕл пуласси шкул ĕçĕ, вĕрентӳ процесĕн пĕр пайĕ пулса тăнине палăртса.

Афганистанра службăра тăнă салтаксен районти канашĕн председателĕ В. Киршев та çак тĕл пулу пур енлĕ усăллă ĕç пулни çинче чарăнса тăчĕ. Кашни вăрçă вăл вилĕм, ишĕлчĕк çуртсем, куççуль. Вячеслав Евсеевич шучĕпе çакăнтан хăтăлас тесен, ачаран çĕршыва юратмалла, пĕлĕве ӳстермелле, сывлăха çирĕплетмелле.

– Юхан шыв леш енчи инçетри вăрçă историе шаларах та шаларах юлса пырать. Унти фронтран Раççее “Груз-200”, “Груз-300” самолетсем те вĕçмеççĕ ĕнтĕ. Анчах мирлĕ



1965 çулта çуралнă, 1984-1986 çулсенче действительнăй çар службине Афганистан Республикинче иртнернĕ, çапăçу хирĕнчи паттăрлăхшăн Хĕрлĕ çăлтăр орденне тивĕçнĕ Игорь Валерианович Михайлов паян ЧР ШĔМĕн милицин патрульпе пост службин взвод командирĕ.

пурнăçа сыхласа хăварасси пĕрлехи ĕç пулнине пирĕн самантлăха та манма юрамасть, – терĕ канаш председателĕ тухакан куççульне çĕнтерсе. “...Мĕн чуль иртрĕç унтанпа кунсем, Афганистан тухмасть ман чĕререн. Асран каймасть мана ирхи Кабул, ту хушшинче автомат пенисем...”, – гитара çеммипе юрлать Олег Мишуткин.

– Эпĕ çак шкултан вĕренсе тухнă. Салтакран килнĕ яшсем пирĕн шкулпа тачă çыхăну тытни пире те Тăван çĕршыва юратма вĕрентрĕ. Ăнланатăп, мирлĕ вăхăтрах вăрçа кайса çапăçасси çăмăл маррине курса вĕсене пулăшассинчен айккинче юлма пултараймастăп, – терĕ митинга хутшăнса “Сеятель” хуçалăх председателĕ А. Соловьев. Алексей Юрьевич тĕл пулăва спонсорла пулăшу пани сăмахсене ĕçпе çирĕплетни пулать те.



Афганистан Республикинчи вăрçа хутшăннă салтаксене тата унта пуç хунă ентешсене асăнса Москакассинче лартнă палăк умне çав вăрçă ветеранĕсем чечек гирлянди хучĕç.



Районти çар комиссарĕн çумĕ Д. Захаров тĕл пулăва пухăннисене саламланă самант.

Тĕл пулура Катькас ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г. Лебедев ку енрен Афганистанри вăрçа 15 çамрăк хутшăнни пирки тата çамрăксен паян çара каяслăхĕ çинче чарăнса тăчĕ. Иртнĕ çул çара каймалли 23 каччăран 4-шĕ çеç çара кайни, 8-шĕ сывлăхпа, 7-шĕ отсрочкăпа, 2-шĕ суд айăплавĕпе, 3-шĕ вара тарса çӳренипе çар ретĕнчен “хăтăлса” юлни пуçлăх шучĕпе пурне те шухăшлаттаракан ыйту.

– Çамрăксем хăйсен çĕршыв умĕнчи тивĕçне çакăнта пухăннисем пек вĕçне çити пурнăçласан, çарти салтаксем Афганистанри пек присягăна шанчăклă пулсан, çĕршыв малашлăхне çирĕп алăра теме пулать. Пирĕн районтан çавăнти вăрçă вутĕнче 144-ăн пулчĕç, 7-шĕ çĕршыв умĕнчи тивĕçе пурнăçласа пуç хучĕç. Тайма пуç вĕсене, – терĕ çак тĕл пулăва хутшăнса район администрацийĕн пуçлăхĕ Юрий Александрович Иванов.

“...Каллех тревога,
Каллех каятпăр çапăçăва.
Хăçан-ши дембль,
Хăçан-ха курăп эп аннене?
Хăçан-ха манăп
Вутра пӳрт-çуртсем çуннине?
Кунта переççĕ,
Кунта пырать вăрçă халь те...”,–

юрлаççĕ гитара кĕввипе Афган вăрçи витĕр тухнипе кушăрханă тутасемлĕ арçынсем. Юрă шăплăха çурать те астăвăма вăратать...

**Анатолий БЕЛОВ.**



Тереçре çуралса ӳснĕ, Калайкасси шкулĕнчен вĕренсе тухнă, 1982–1984 çулсенче Афганистанри вăрçа хутшăннă Юрий Анатольевич Шариков запасри сержант тăван шкул ачисене тăрăшса вĕренме тата спортпа туслăрах пулма сĕнсе тортпа хăналарĕ.

**Уйăхлăха хутшăнса**

## Мероприятисем чылай иртеççĕ

Кашни çулах районти шкулсенче январь уйăхĕн вĕçĕпе февраль уйăхĕн 23-мĕшĕччен оборонăллă-массăллă ĕçсен уйăхлăхне хатĕрленсе ирттереççĕ. Кăçал та, акă, пирĕн Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта уйăхлăха хутшăнма ятарласа ĕç планĕ хатĕрлерĕç. Шкул ачисем уйăхлăха ирттерме пысăк хавхаланупа пуçăнчĕç. Ĕç планне хатĕрленĕ çĕре аслăрах классенче вĕренекенсем пурте хутшăнчĕç, шкул ачисен линейкинче пăхса тухрĕç, оборонăллă-массăллă ĕçсен кĕтесне плакатсемпе йĕркелерĕç. Тĕрлĕ вăйăсене ирттернĕ чухне инкек-синкек пулса тухасран асăрханмалли çинчен те асăрхаттару ĕçне малти вырăна хучĕç.

Уйăхлăх хушшинче 16 тĕрлĕ ĕç тума палăртнă, вĕсенчен иккĕшне пурнăçланă та ĕнтĕ.

Шкулти оборонăллă-массăллă ĕçсене физкультура тата ОБЖ учителĕ Лев Андреевич Яриков йĕркелесе пырать. «Çамрăк стрелок» тата йĕлтĕрпе чупса мала тухассишĕн ăмăртусем иртрĕç. Йĕлтĕрпе чупассипе тата «Çамрăк стрелок» ăмăртура Максим Маслов отрячĕ мала тухрĕ. Йĕлтĕрçĕсем хушшинче уйрăмах М. Маслов, А. Гониашвили, О. Кирпичникова, Н. Скворцов, И. Анисимова, Н. Ефремова, А. Максимов вĕренекенсем малти вырăнсене йышăнчĕç.

Уйăхлăхпа ирттерекен ĕçсем малалла пыраççĕ.

**Михаил ПЕРЛОВ.**

Кашмаш шкулĕ, 7 класс.

### Тӳрлетни

Хаçатăн февралĕн 17-мĕшĕнчи номерĕнче выльăх-чĕрлĕх пăхакансен районти канашлăвне халалланă кăларăмра «Кашнинченех килет ăнăçу» корреспонденци пичетленнĕччĕ. Унта сăмах Чкалов яч. хис. хуçалăх пирки пырать. Ку материалта хуçалăх ертӳçине тĕрĕс мар асăннă. Ăна Павел Геннадьевич Ефимов тесе вуламалла. Çавна май Павел Геннадьевичран тата хуçалăх ĕçченĕсенчен каçару ыйтатăп.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Фронтовик аса илет**

## Эпир Тăван çĕршыва юратнă

Хальхи çамрăк призывниксем хушшинче çара кайма килĕшмесĕр Тăван çĕршыва хӳтĕлеме каяссинчен пăрăнса çӳрекенсем пуррине пĕлсен, çакă вăл мана, Германи патшалăхĕн пуçлăхĕ Адольф Гитлер пуçласа янă иккĕмĕш тĕнче вăрçине çамрăклах хутшăннăскере, тĕлĕнтерсе тарăн шухăша ячĕ. Паянхи çамрăксене эпĕ çакна каласшăн. Пирĕн вăхăтра вун çичĕ çул тултарман çамрăксене çара илсе. Вăл вăхăтра çĕршывра калама çук хаяр çапăçусем пынă. Сталинград хулинче тата Кавказра юн юхнă. Вăрçă хирĕнчен кашни кун тенĕ пекех ялсене вилни çинчен хыпарсем килсех тăнă. Апла пулин те хальхи пек салтак службинчен пăрăнса тарса çӳреме шутлакансем пирĕн çамрăксем хушшинче пулман. Тивĕçлисем пурте çар ретне тăрса хаяр тăшмантан Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ.

Çакна эпĕ лайăх астăватăп-ха. Призыв комиссийĕ хыççăн çара кайма çар комиссариатĕнчен повестка килессе эпир чунтан кĕтнĕ. Тăван çĕршыва хӳтĕлеме пирĕн каяс килнĕ.

Сăмахăма малалла тăснă май чуна хумхантарса тĕлĕнтерекен пулăм çинчен çырса кăтартасшăн эпĕ паянхи çамрăксене. Ку пулăма ĕненес те килмест темелле. Анчах та вăл пулăм чăннипех пулса иртнĕ.

Акă, пирĕн районти Мăн Тутаркас ялĕнче 1933 çулта çуралнă Алексей Самуилович Адамов вăрçăн иккĕмĕш çулĕнче, 1942 çулхи июль уйăхĕнче, амăшĕнчен вăрттăн сухари хатĕрлесе ашшĕн адресĕпе ашшĕне курма вăрçă хирне тухса каять. Çĕмĕрле хулине каякан автомашина ăна хулана çитерет. Станцинче Мускава каякан çар эшелонĕ пăс кăларса тăнă. Макăрса тăракан ачана вăрçа каякан салтаксем вакуна лартса, хăйсемпе илнĕ. Çапла вара тăхăр çулхи Алеша ашшĕне вăрçă хирĕнче шыраса тупатех. Вăл 1223 полк ывăлĕ пулса тăрать. Пулеметчикăн пулăшаканĕ пулса тăшмана хирĕç çапăçма пуçлать. Сакăр кун иртсен Алеша йывăр аманать. Госпитале лекет. Халĕ вăл запасри майор, Шупашкарта пурăнать.

Аса илер-ха çамрăк гварди организацине. Организацинче пĕтĕмпех çамрăк комсомолецсем пулнă. Вĕсем тăшман тылĕнче пулнă май, пирĕн çарсен пуçлăхĕсене тăшман çинчен питĕ кирлĕ сведенисем парса тăнă. Пĕр вĕçĕмсĕр тăшманăн çулне картласа тăнă вĕсем.

Сăмах май, çакна та асăнса хăваратăп. Вăрçă пуçланнă кунсенчех Тăван çĕршыва тăшманран хӳтĕлесе хăварас тĕллевпе тăшмана хирĕç кĕрешме партизансен юхăмĕ пуçланса кайрĕ. Партизансен отрячĕсенче ытларахăшĕ хăйсен ирĕкĕпе пынă çамрăксем пулнă. Тӳрех çапла калама юрать. Совет партизанĕсем вара малтанхи кунсенчех Хĕвел анăçĕнче тăшман тылĕнче чăн-чăн иккĕмĕш фронт уçрĕç. Пирĕн партизансем тăшман çарне ниçта та çул паман. Çарпа тата вăрçă техникипе каякан эшелонсене çул айккине ӳпĕнтернĕ. Юхан шыв урлă хывнă кĕперсене сывлăшалла сирпĕтнĕ. Эпĕ çирĕплетсех калатăп: ку ĕçре пирĕн Совет Союзĕн çамрăкĕсен тӳпи пысăк пулнă.

Вăрçă пынă вăхăтра пирĕн çамрăксем пур çĕрте те хастар пулнă. 14 çулхи çамрăксем окопсем чавнă, вăрман каснă, вăй çитнĕ таран фронта пулăшнă. Вăрçа пула юлнă уй-хирти тырăпулăна пуçтарса илнĕ, вăрçă хирне ăсатнă. Халĕ вара хăш-пĕр çамрăксем урăх шухăшпа пурăнаççĕ курăнать.

Сăмахăма вĕçленĕ май паянхи çамрăксене юлашкинчен эпĕ çакна каласшăн. Пирĕн вăхăтра салтака кайман çамрăксене çын шутне хуман. “Эсĕ салтак пулма та тивĕçлĕ çын пулман” тенĕ вĕсене. Хĕрсем те кăмăлласах кайман ун пеккисене.

Сывлăхсем салтак ретне тăма çитеççĕ пулсан, ман шутпа, Тăван çĕршыва юратса салтак ретне тăмаллах.

**В. ИВАНОВ,**
**Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕ.**

Кашмаш ялĕ.